**Асанне мана вĕрентрĕ**

Асанне мана вĕрентрĕ
Шутлама пӳрнесене.
Халиччен те эп илтмен-тĕр
Ҫакăн пек сăмахсене:
Пас пӳрне, палан ӳте,
Ӳте тирĕк, сĕм сĕмекке,
Кĕчкĕне папи.
Пас пӳрне — куна пĕлетĕп,
Кĕчкĕне вăл — кĕҫĕнни.
Асăмран тухмасть пĕрре те
Асанне мĕн калани:

Пас пӳрне, палан ӳте,
Ӳте тирĕк, сĕм сĕмекке,
Кĕчкĕне папи.

Мĕн-ши вăл ӳте тирекĕ?
Хăшĕ вăл палан ӳте?
Асанне пĕлместĕп терĕ,
Вăрттăн кулчĕ асатте.
Пас пӳрне, палан ӳте,
Ӳте тирек, сĕм сĕмекке
Кĕчкĕне папи.
Авалхи самах хăвачĕ
Пур-тăр ҫав, пĕлесчĕ-ҫке.
Пурпĕрех ăна тупасчĕ,
Пулас марччĕ сĕмекке.
Пас пӳрне, палан ӳте,
Ӳте тирĕк, сĕм сĕмекке,

Кĕчкĕне папи.

Ушкăнпа пĕрле шырар-и

Çав сăмахăн тупсăмне?

Тантăшсем мана ырларĕç

Хуçлатса пӳрнисене:

Пас пӳрне, палан ӳте,

Ӳте тирĕк, сĕм сĕмекке,

Кĕчкĕне папи.

*Борлен,Б. Асанне мана вĕрентрĕ : [сăвă] / Б. Борлен // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 265.*